ПОРФИРИЙ АФАНАСЬЕВ

# САН ЯТУПА



СĂВĂЛЛА ТРАГЕДИ

ПОРФИРИЙ АФАНАСЬЕВ

# САН ЯТУПА

СĂВĂЛЛА
ТРАГЕДИ

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1986

# ПРОЛОГ



Çурма тĕттĕм сцена варринче — А х а х п и. Анаткасра вăл пĕрремĕш хут. Ялăн ытарайми илемĕ тыткăнланă ăна. Кăшт шухăшлăрах, çапах савăнăçлă вăл. Çак вăхăтра Я к у р курăнса каять. Ахахпие пуçласа курнăран пĕр хушă ним хускалмасăр тăрать, хĕр çине тĕлĕнсе сăнаса пăхать.

Тĕрлĕ енчен, пĕрне-пĕри кăчăк туртса, Ç ĕ р (хĕрарăм), В ă х ă т (йĕкĕт), Ю р а т у (çамрăк хĕр) тухаççĕ. Я к у р çакна асăрхать те, пăлханнине пытарма тăрăшса, вĕсем патне çывхарать.

Я к у р

Аван-и, Çĕр-анне?
Мĕн çăмăлпа çÿретĕн?

Ç ĕ р

Эс Çĕр ĕçне-пуçне
Хăвах аван пĕлетĕн.
Тырпул, ав, çĕкленет,
Çăмăлланма васкатăп.

# ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

## ПĔРРЕМĔШ КАРТИНĂ



Ҫаҫ чатăрне ҫурса, кăвак хуппи пек, уяв юрри янраса каfive. Малтан ҫав юрра, уҫҫăн та пăлхавлăн, пĕр хĕр пуҫлать, каярах ун ҫумне ыттисем хутшăнаҫҫĕ. Ял хĕрринчи улăхра — чечеклĕ ҫуркунне. Кунта ҫамрăксен вăййи пырать. Вăйă картинче — яшсемпе хĕрсем. Кăшт аяккарах хăрах куҫне тутăрпа ҫыхса янă П ă р т т а с, Е р м и тата В а н ю р к к а тăраҫҫĕ.

В а н ю р к к а

Эй, йĕкĕтсем! Епле уяв паян!
Хĕрсем епле! Пĕри ман пулатех.

П ă р т т а с

Хăна хĕрне куҫ хыврăн, шăпăрлан?
Ан асаплан, ку шухăш ахалех.

Е р м и

Анчах шăв-шав е ҫапăҫу ан тăвăр,
Вăл хĕр кам иккенне пĕлетĕр хăвăр.

## ИККЁМЁШ КАРТИНА



Тĕттĕм. Ял çывăрать. Шăпчăксем каçăхса кайса шăхăрни тата инçетре шакăртма шакăртатни çеç илтĕнет. Акă, çутă пайăрки сцена тăрăх куçса-куçса пырать те пĕр çуртра тарăн ыйăха путнă арçын çинче чарăнса тăрать. Ку — Я к у р.

Çак вăхăтра иккĕмĕш пайăрка хĕрсех тем ăнлантаракан ял Совет председательне Ухливана, Якур çине шăтарасла пăхса тăракан Ахахпие, самăр Сапруна, каллех Ахахпие, Ухливана, тепĕр хут Ахахпиех кăлара-кăлара тăратать. Якур тĕлленет иккен. Иккĕмĕш пайăркара Ахахпи кăна тăрса юлать. Кăчăк туртса, Якура хăй патне чĕнет хĕр, тархаслать, йыхăрать. Анчах хăй аякран-аякка кайса пырать, тепĕртакран пач курăнми пулать.

Якур ыйхă тĕлĕшпе йынăшса илет, тепĕр енне çаврăнса выртать.

Шăпчăксем çаплах çурхи каça мухтаççĕ.

Сасартăк кантăкран шаккани илтĕнсе каять. Якур васкавлăн сиксе тăрать те минтер айĕнчен револьверне туртса кăларать.

Кантăкран каллех шаккаççĕ.

Çутă пайăрки пÿрт умĕнче тăракан А х а х п и çине ÿкет. Вăл — урăх кĕпепе.

# ВИÇÇĔМĔШ КАРТИНА



Сапрун çурчĕ. Кунта — Сапрунпа Ахахпи.
Ахахпи — кивĕ кĕпепе, ку вăл Чĕкеç кĕпи пулас. Ахахпи хăнара самаях нумай ларнă пулмалла, сĕтел çинче— пушаннă турилкке, кашăк. Сапрун вара, пашка-пашка, автан тукмакĕ çиет. Ун питçăмарти тăрăх çу юхать. Ахахпи темиçе хутчен те Сапрун çине пăхса илет.

Сапрун

*(чеен куç хĕссе)*

...Вара, тăванăм, килĕшрĕ-и ял?

Ахахпи

Мĕнле калас?
Ял — ял пекех. Хитре.

Сапрун

Қарма çăварсене хавасланса итле.
Анаткасра эс пултăн-ха сахал.
Қăшт пурăн-ха. Сана эп хам хире,
Хам вăрмана илсе кайса кăтартăп.

# ТӐВАТТӐМӖШ КАРТИНА



Чӗкеҫӗн чухӑн пӳрчӗ. Сӗтел хушшинче тӗрӗ тӗрлесе ларакан Ч ӗ к е ҫ хуллен юрлать.

Ч ӗ к е ҫ

Анаталла мӗн лайӑх та,
Анаталла ҫул лайӑх.
Савни, саншӑн мӗн лайӑх та,
Маншӑн пулсан, эс лайӑх.
Уйӑх тӑлӑх, уйӑх тӑлӑх
Ҫакӑ кӑвак тӳпере.
Савни, мана сансӑр кичем
Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере.
Ҫӑвак чечек хумханать те
Ҫашни ҫил вӗрмессерен.
Чун савни аса килет те
Ҫашни сывламассерен.
Эх, юрату, юрату та...

Ҫӗтмен ҫӗртен алӑк уҫӑлать те, пӳрте В а н ю р к к а кӗрсе тӑрать. Чӗкеҫ хӑйӗн тӗррине йӑпӑр-япӑр пытарма тӑрӑшать.

## ПИЛЛĔКМĔШ КАРТИНА



Ял Совечĕ умĕнче — йăмра. Ун айĕнче тăрăхла сак. Алăкран Ухливан тухнине курсан, Çинави кăшкăрса макăрса ярать.

Çинави

Пĕтертĕр ывăла! Пĕтертĕр! Çирĕр!
Ах, мăшкăл!
Ах, кулатăр-çке çынран!
Ак мейĕр, амăшĕн чунне те
туртса илĕр,
Вĕлерĕр! Ах! Ылхан сире, ылхан!

Ухливан Çинавие пур майсемпе те лăплантарма тăрăшать.

Ухливан

Лăплан, Çинав аппа.
Лăплан, тархасшăн.
Макăрнипе халь нимĕн те тăваймăн.
Ун ăс-пуçне, паллах, пăтратнă тахăш.

# ИККĔМĔШ ПАЙĔ

## УЛТТĂМĔШ КАРТИНА



Каç. Çыран хĕрри. Ватă хурама. Таçта аякра хĕрсен юрри илтĕнет. Хурама айĕнчи сак çинче Ч ĕ к е ç ларать. Кăшт аяккарах — А х а х п и. Вăл инçете тинкернĕ, шухăша кайнă.

Ч ĕ к е ç

Каллех килмерĕ вăл.
Юлмасть пуль çав
Ун вăхăчĕ манпа кăшт калаçмалăх.
Таçта-таçта çитет те кун каçа,
Кĕнекисем тата — ирччен лармалăх.

А х а х п и

Юрать. Килмерĕ кĕçĕр Ухливан.
Якур ăçта çӳрет-ха, çилхăван?

# ÇИЧЧĔМĔШ КАРТИНА



Сапрун çурчĕ. Ҫил хуçи, пăлханнăскер, унталла та кунталла утать. Хутран-ситрен сасартăк тăп чарăнса тăрать те хăйĕн йăлана кĕнĕ куллине тапратать, унтан каллех, ним пулман пек, пÿрт тăрăх хутлама пуçлать. Вăхăт-вăхăт пÿлĕме сĕтел çинчи чашăк-тирĕке пуçтарма Улюк кĕрсе тухать. Вăл пĕрре Сапрун çине, тепре стена çинче çакăнса тăракан ик кĕпçеллĕ пăшал çине шикленсе пăхать. Сапрун Улюка асăрхамасть те тейĕн. Вăл тарăн шухăша путнă.

Улюк
*(хăй тĕллĕн)*

Ах, кÿтрĕ чун çак мăшкăла чăтса.
Ҫуççулĕм типрĕ вĕççĕр макăрса.
Сапрун хуçа тискеррĕн те чеен
Шывпа юхтарчĕ манăн телее.
Эп те пулма пултарнă çут шăпаллă,
Ача-пăчаллă, савнă упăшкаллă...
Ҫук! Вăйăм-халăм çук текех чăтма!
Эс асăрхан манран, хура тăшман!
Хам вилĕп те — пĕтерĕп Сапруна.
Ҫак пăшалпа тĕплесчĕ сан пуçна!

## САККĂРМĔШ КАРТИНА



Ял Совечĕ умĕнчи тăрăхла сак çинче Ч ĕ к е ç шухăша кайса ларать. Ухливана кĕтет. Ќаç пулнă ĕнтĕ. Инçетре вăйă юрри илтĕнет.

Ч ĕ к е ç

*(çӳлелле пăхса, ассăн сывлать)*

Пĕр çăлтăр курăнмасть.
Ытла хăрушă.
Ќаçпа шевле вылянăччĕ пĕр хушă,
Ќаллех лăпланчĕ, акă.
Вулăсран
Ќилсе çитет-ши кĕçĕр Ухливан?

Тĕмсем хушшипе йăпшăна-йăпшăна П ă р т т а с кĕрет.

П ă р т т а с

Ав эс ăçта иккен.
Тухатăп терĕн.
Эс кур-ха, кур...
Ăт, тăлăх хĕр темерĕн,

# ТĂХХĂРМĔШ КАРТИНА



Сапрун пӳрчĕ. Çутăлнă. Аскольд кравать çинче тĕлĕрсе выртать. Вăл аялти шурă кĕпепе. Сапрун, эрех кĕленчи тытса, унталла-кунталла чупкалать, вăранман-ши тесе, Аскольд еннелле пăхкалать, кухньăна кĕрсе кайса, Улюка ирхи апат пĕçерме васкатать. Çак вăхăтра Аскольд туртăнса илсе анаслать те вырăн çинчен ăçта-ши эпĕ тенĕ пек, васкавлăн сиксе тăрать, унталла-кунталла пăхкалать. Çав вăхăтра тепĕр пӳлĕмрен Есаул йăпăр-япăр чупса тухать, Аскольда атă тăхăнма пулăшать, пăтари мундирне илсе парать. Вĕсем патне Сапрун пырса тăрать.

Аскольд

Якур-и, мур-и?
Кам вăл çак ялта?!

Сапрун

Кам пултăр вăл?
Паллах, çĕлен-калта.
Пире тăпăлтармашкăн килнĕскер.
Анранă большевик.
Юхха арçын.

# ВУННĂМĔШ КАРТИНА



Çĕрлехи сĕм вăрман. Ахахпи — Якур ытамĕнче. Хуллен илтĕнекен пăлхавлă кĕвĕ мăнаçланса пырать.

Якур

Мĕнле аван! Эс килтĕн! Пит аван!
Эс хăрамарăн çак хура каçран.
Қала мĕн те пулин.
Ан тăр чĕнмесĕр.
Ай-юй, ман пирĕшти паян
чĕлхесĕр!
Çав çăлтăра сана
татса парас-и?
Сана ман çак вăрман турри
тăвас-и?
Вĕçес-и ман санпа çӳл тӳпене?
Ав, уйăх та тухать.
Унти хĕр-пикене
Хуса ярса, унта сана лартас-и?
Эх, ылтăнăм, эх, пурнăçăм-хавасăм,
Юрать, çут тĕнчере хăть эсĕ пур.
Қичем те тăлăх пулĕччĕ Якур,

## ВУНПЁРМЁШ КАРТИНА



Сапрун çурчĕ. Пӳрте Есаул чупса кĕрет те тумланса тăракан Аскольд умне пырать.

Есаул

Аскольд Лексантрăч!
Пĕр кĕтмен хыпар
Разведка илсе килчĕ:
Хĕрлĕ Çар
Çул тытнă, тет, килмешкĕн кунталла.
Полковник господин, мĕн тумалла?

Аскольд

Çак самантрах тăрат салтаксене!
Ура çине! Йĕнерлĕр утсене!

Есаул

*(тухса кайма тăрать, анчах тем аса илет те каялла таврăнать)*

Леш кайăкпа мĕн тăвăпăр эпир?